**МИНИСТЕРСТВО ПРОСВЕЩЕНИЯ РОССИЙСКОЙ ФЕДЕРАЦИИ**

**Министерство образования Чувашской Республики**

**Администрация Красночетайского муниципального округа**

**МБОУ "Мижеркасинская ООШ"**

| РАССМОТРЕНО | СОГЛАСОВАНО | УТВЕРЖДЕНО |
|---|---|---|
| Педсоветом | ШМО учителей | И.о. директора |
| | | В.В.Данилов |
| Протокол № 1<br>от «29» августа 2023 г. | Протокол № 1<br>от «29» августа 2023 г. | Приказ № 83/2-В<br>от «30» августа 2023 г. |

**РАБОЧАЯ ПРОГРАММА**

**учебного предмета «Чувашский язык»**

для обучающихся 2 класса.

**с. Мижеркасы 2023**

**Чăваш пуçламăш шкулĕн 2-мĕш класĕнче чăваш чĕлхине вĕрентесси**

**Ăнлантарни**

Тăван чĕлхе вĕрентесси виçĕ пайран тăрать: 1) вулама-çырма вĕрентесси; 2) пуплев ĕç-хĕлĕсене (вулав, çыру, калу, итлев) вĕрентесси; 3) пуплеве пур енлĕн аталантарнă май чĕлхе пулăмĕсемпе ансат паллаштарасси, пуплеве тишкерме вĕрентесси. Çак виçĕ пая пуплеве аталантарас тĕллев пĕрлештерсе тăрать. Çапла вара, тăван сăмахлăха вĕрентни кирлĕрен те кирлĕ ăслайсемпе хăнăхусене аталантарса çирĕплетессипе тӳррĕнех çыхăнмалла. Çав ăслайсемпе хăнăхусем шутĕнче — ăнланса вуласси тата тăнласси, çыхăнуллă калаçасси, çырасси. Çавăнпа пĕрлех ачасене чĕлхе ăслăлăхĕпе литература пĕлĕвĕн ансат ăнлавĕсемпе, литературăпа сăмахлăх ӳнерĕ пек паллаштарнă май вĕсен харпăр хăйĕн тата юлташĕсен пуплевне сăнас, чĕлхе илемне туйса ăна тарăнрах пĕлес туртăмне амалантармалла. Пĕтĕм халăх усă куракан литература чĕлхин сасă тытăмĕпе, сăмах пуянлăхĕпе, морфологи тата синтаксис мелĕсемпе паллаштарнă хушăрах вĕсене вырăнти калаçу уйрăмлăхĕсене курма та вĕрентмелле.

Ача пуплевĕнчи тĕп ĕç-хĕлсене (тăнлассине, калаçассине, вулассине, çырассине) аталантарса пынипе пĕрлех тăван чĕлхе вĕрентнĕ чух пуçламăш шкулта çакăн пек пысăк та пархатарлă тĕллевсене пурнăçламалла:

- вĕренекенсен çынлăх туйăмĕсене вăйлатмалла, пурнăçа юратма, ырра шанса тăма тата хайсене те ырă кăмăллă, сăпайлă пулма хăнăхтармалла;

- ачасем таврари пурнăç, этемпе çут çанталăк çинчен мĕн пĕлнине анлăлатмалла;

- ачасен çыхăнуллă тата сăнарлă шухăшлавĕпе асне, асамлас хевтине аталантармалла;

- вĕренӳ ĕç-хĕлне лайăхрах хăнăхтарса, унăн ăслайĕсене «алла илме» май памалла; вĕренӳ вăхăчĕпе перекетлe усă курма, харпăр хăй тĕллĕн ĕçлессин ансатрах мелесене чухлама вĕрентмелле;

— тăрăшуллă та тимлĕ вĕренме, кĕнекепе кăсăкланма хăнăхтармалла.

Программари веренӳ материалĕпе верентӳ меслечĕсем ачасене çирĕп пĕлӳпе ăслайсем, кирлĕ ханăхусем ларччăр тесен дидактикăн тĕп принципĕсене асра тытса вĕренӳ ăнланулăхепе кăсăклăхне, çыхăнулахĕпе тĕллевлĕхне ялан пурнăçласа пымалла.

**ВУЛАС-ÇЫРАС МЕХЕЛСЕНЕ НИКĔСЛЕССИНЕ ЛИТЕРАТУРА ЧĔЛХИНЕ ВĔРЕНТЕССИПЕ ТАТА ПУПЛЕВЕ АТАЛАНТАРАССИПЕ ÇЫХĂНТАРАССИ**

Тăван чĕлхе вĕрентессин пĕрремĕш тапхăрĕ 1-мĕш класра авăн уйăхĕнчен пуçласа ака уйăхĕн çурри таран тăсăлать. Ку тапхăрăн тĕп тĕллевĕ - тăван çыулăхпа усă курас мехелсене никĕслесси. Çак тĕллеве пурнăçласси чи малтан литература чĕлхипе усă курма (çав шутра итлесе ăнланасси, калаçасси) хăнăхтарнинчен пуçланать, ун çине таянать. Тапхăр икĕ пая уйрăлать. Пĕрремĕшĕн тĕллевĕ - ачасене сас паллисем вĕренме хатĕрлесси. Çак тĕллевпе вĕсен çыхăнуллă пуплевре предложенисене, предложенири сăмахсене, сăмахри сыпăксене тата сасăсене илтес-уйăрас пултарулăхне аталантармалла. Иккĕмĕшĕн тĕллевĕ - вулас-çырас ансат хăнăхусем парасси.

Литература чĕлхипе усă курма вĕрентес шутпа ачасене экскурсисене илсе çӳренĕ, çут çанталăк пулăмĕсене сăнаттарнă май вĕсем таврари пурнăç çинчен мĕн пĕлнине анлăлатмалла, вĕсен сăмах йышне пуянлатмалла, тăтăшрах тĕл пулакан грамматика формисене, синтаксис конструкцийĕсене пуплевре çирĕплетмелле. Вĕренӳ материалĕпе меслечĕсем ачасен пĕтĕмĕшле аталанăвне хăвăртлатма, вĕренӳри тăрăшулăхне, юлташлăхпа туслăх, ушкăнлăх туйăмĕсене вăйлатма пулăшмалла.

Вулама-çырма вĕрентес ĕçре анализпа синтез меслечĕн хальхи вариантне тĕпе хумалла. Вăл ăслăлăхăн паянхи шайĕпе килĕшсе тăрать, ачасен ăс-тăнне, пуплевне ăнăçлă аталантарма май парать, ăнланса, тĕрĕс те палăртуллă вулама вĕрентессине чылай çăмăллатать. Вĕренекенсем малтанхи кунсенченех пуплеври предложенисене, предложенири сăмахсене, сăмахри сыпăксене, сасăсене илтме-уйăрма пуçлаççĕ. Ерипенех сасăсене сас паллисемпе палăртма, ансат сăмахсем пухма, предложенисемпе çыхăнуллă текстсене ăнланса, тĕрĕс (малтан - сыпăкăн, унтан - тулли сăмахăн) вулама хăнăхса пыраççĕ.

Вуланипе пĕрлех вĕсен çыру хăнăхăвĕсем те йĕркеленеççĕ: сасăсене сас паллисемпе палăртма, сас паллисемпе сыпăксенчен сăмахсем пухма, ал çырăвĕнчен тата пичетленч текстран сăмахсемпе предложенисем çырса илме, ансат тытăмлă сăмахсемпе вĕсенчен тăракан кĕске предложенисене илтнĕ тăрăх çырма, предложение, çынсен е чĕр чунсен пайăр ячĕсене пысăк сас паллипе пуçласа çыма вĕренеççĕ.

Хутла вĕрентнĕ тапхăр тăршшĕпех ачасен сасă сисĕмне (сăмахра, сыпăкра уйрăм сасса илтес-уйăрас, сасăсем мĕнле черетленнине асăрхас пултарулăхне) аталантарма тăрăшмалла, çавăнпа пĕрлех вĕсен сасса, сыпăка уçăмлă та тĕрĕс калас хăнăхăвĕсене лайăхлатса пымалла.

Вулама-çырма вĕрентмелли уроксенче ачасен тăнлас, çын пуплевне ăнланса та туллин асăмлас ăслайĕ те аталанать. Вĕсем класс умĕнче калаçма, ыйтусене хуравлама, ыйту пама, вуланине каласа пама, хăйсен сăнавĕсем çинчен, курнă фильмсем, ӳкерчĕксем çинчен çыхăнуллă каласа кăтартма вĕренеççĕ.

Уроксенче туяннă пĕлӳсемпе, ăслайсемпе ачасем класс тулашĕнчи вулав вăхăтĕнче, ушкăнпа кĕнеке пăхна чух усă курма хăнăхаççĕ. Ултă çулхи ачасен ӳсĕмне шута илсе, вулама-çырма вĕрентнĕ пуçламăш тапхăрта вĕсен урокри ĕç-хĕлне нумай енлĕ йĕркелеме тăрăшмалла: ӳт-пĕве вылятмалли хăнăхтарусемпе вăйăсем ирттермелле, юрлаттармалла, сăвă калаттармалла, вăйă мелĕсемпе, букварьти евĕр вулав-çыру вăййисемпе ытларах усă курмалла. Ку шута «сапаланнă» сăмахсене сас паллисемпе сыпăксенчен пухасси, сăмах сăнчăрĕсем тăвасси, хăвăрт калăшсем каласси, пуç ватмăшсем, ребуссем шутласси т.ыт.те кĕрет. Вĕсемпе вырăнлă усă курни ачасене кантарма, ăс-тăнне уçăлтарма пулăшать, пĕр ĕçрен тепĕр ĕçе харăссăн куçассине те çăмăллатать.

Ку тапхăрта ачасем вĕрентӳçĕ ертсе пынипе çут çанталăк улшăнăвĕсене, çулталăк вăхăчĕсем ылмашнăçемĕн этем пурнăçĕпе ĕçĕ епле улшăннине сăнаççĕ, çакăн çинчен çыхăнуллăн каласа пама вĕреннĕ май литература чĕлхипе вырăнти калаçăва уйăрас хăнăхусем илеççĕ.

**ЧĔЛХЕНЕ ТИШКЕРЕС ХĂНĂХУСЕНЕ НИКĔСЛЕССИ,**
**ЧĔЛХЕ ПĔЛĔВĔН ТЕРМИНĔСЕМПЕ ПАЛЛАШТАРАССИ**

Пуплеве пур енлĕн аталантарасси вулас, çырас, çыхăнуллă калаçас, тăнласа ăнланас мехелсене куллен вăйлатни çинче никĕсленсе тăрать. Шăп çавăнпа ĕнтĕ тăван чĕлхе урокĕсенче çыхăнуллă текстпа ĕçлесси тĕп вырăнта пулмалла. Ачасем ăна вуласа е тăнласа ун тăрăх калаçаççĕ, хăйсем текст хайлаççĕ, çыру хăнăхтарăвĕсем пурнăçлаççĕ.

Ăнланса вулас тата тăнлас, уçăмлă çырас тата калаçас мехеле аталантарасси çак пуплев ĕç-хĕлĕсене çĕнĕрен тепрер хут пурнăçланипе çеç çыхăнмасть. Кашни çĕнĕ урокрах ачасен пуплевĕн тĕрлĕ енне, вĕсен чĕлхе мулĕн тĕрлĕ сийĕпе усă курма пĕлнине çине-çинех çирĕплетсе, анлăлатса пымалла. Сасăсене тĕрĕс калас, вĕсене çырура палăртас, интонаци мелĕсемпе пĕлсе усă курас ăсталăха куллен якатмалла.

Тăван çырулăх чĕлхин сăмах йышĕ вырăнти (тури, анатри) калаçурипе танлаштарсан чылай уйрăлса тăрать. Çакна шута илсе ачасене кулленех çырулăх чĕлхин сăмахлăхĕпе паллаштармалла, уроксене ятарласа словарь хăнăхтарăвĕсем кĕртмелле. Çав шутра çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсемпе хирĕçле пĕлтерĕшлисене тупса палăртасси, темиçе пĕлтерĕшлĕ сăмахсене асăрхасси, пĕр пек пайсенчен тăракан (пĕр тымартан, пĕр аффикс хушăнса пулнă) сăмахсене, çавăн пекех пĕр темăпа çыхăннисене ушкăнласси, аса илсе каласси е çырасси, вĕсен пĕлтерĕшне тавçăрасси пулмалла.

Паянхи орфографи правилисем икĕ никĕс çине тĕренеççĕ. Тĕп чăваш чĕлхинчи сăмахсене чăн чăвашла, «каланă пек» (атте, анне, атă, пăтă, упа, эпир, аппа) çыраççĕ. Вырăс чĕлхинчен «урăхлатмасăр» илнĕ сăмахсене - «вырăсла» (парта, медаль, баян, колхоз, завод, фабрика). Çавна шута илсе ачасен сăмах йышне пуянлатнă май вырăс чĕлхи урлă кĕнĕ сăмахсене туйма, вĕсене мĕнле çырнине асăрхама вĕрентмелле.

Пуплеве аталантармалли тепĕр ăслай - ачасем тăван чĕлхери морфологи мелĕсемпе, урăхла каласан, сăмахсен тĕрлĕ формипе усă курма пĕлнине куллен лайăхлатасси.

Морфологи формисемпе усă курма пĕлни синтаксис мелĕсемпе тĕрĕс усă курма вĕрентес ĕçре пулăшать. Шкула тин çеç çӳреме тытăннă ачан пуплевĕ морфологи формисем енчен кăна мар, сăмах майлашăвĕсемпе предложенисен калăпĕсем тĕлĕшĕнчен те чухăнрах. Шухăша тĕрĕс ăнланма, ăна уçăмлăн палăртма хăнăхтарас тесен пуçламăш классенче вĕренекенсене тĕрлĕ калăплă сăмах майлашăвĕпе, предложенипе усă курма вĕрентмелле, вĕсен пуплевĕн синтаксисне аталантармалла. Ку тĕллеве пурнăçласси чĕлхе ăслăлăхне ятарлă вĕрентнипе мар, урокран урока ту са пыракан тĕллевлĕ хăнăхтарусем пулăшнипе пулса пымалла. Çамрăксен чĕлхи тӳрккес те кăнттам ан пултăр тесен вĕсене хутшăнура ырă та евĕк пулма вĕрентмелле, чĕлхемĕрпе пĕлсе те сисĕмлĕ усă курма хăнăху памалла. Çапла вара, чĕлхе культури, стилистики - тăван чĕлхе урокĕсенче тимлемелли тепĕр пысăк тĕллев. Ку тĕллев çыхăнуллă пуплеве вĕрентессипе пĕр килет.

Хутшăнура (диалогра) тăван чĕлхемĕр «мулĕпе» усă курма, çыхăнуллă калав тума пĕлнине лайăхлатасси - чĕлхемĕр пуянлăхĕн пур сийĕпе те усă курма пĕлнине «шăратса çыпăçтаракан» тĕллев. Ку тĕллеве пурнăçласси пуплев хăнăхтарăвĕсем çине таянмалла. Вĕсем урокра тĕп вырăн йышăнмалла. Вĕсемсĕр пуçне кашни урокрах фонетика, орфографи, лексика, морфологи, синтаксис, стилистика хăнăхтарăвĕсем те пулмалла. Пуплеве аталантарассин тухăçлăхĕ шăпах ĕнтĕ пуплев хăнăхтарăвĕсене «чĕлхе» е аспект хăнăхтарăвĕсемпе çирĕплетсе пынинчен килет.

Пуплеве аталантарассин виççĕмĕш енĕ вăл — ачасене пуплеве тишкерме хăнăхтарни, урăхла каласан, чĕлхе тишкерĕвне вĕрентни. Ку вăл пуплеве фонетикăпа графика, орфографипе пунктуаци, мор-фологипе синтаксис, сăмах тытăмĕпе сăмах пулăвĕ енчен ансаттăн тишкерессипе çыхăнать.

Çакна асра тытмалла: кăткăс пулăмсене тишкерме сĕннин уссинчен сиенĕ ытларах пулĕ.

Чĕлхери ансат пулăмсене тишкернĕ май ачасене чĕлхе ăслă-лăхĕн терминĕсемпе паллаштарса вĕсене ăнланма, вĕсемпе усă курма вĕрентмелле. Терминсемпе усă курма вĕрентесси - ерипен, васкамасăр туса пымалли ĕç. Вăл пуплеве аталантарассине кансĕрлемелле мар. Терминсемпе усă курма вĕрентесси вулас-сипе, тăнлассипе, калаçури йăнăшсене асăрхаса тӳрлетессипе çăмăллăнах çыхăнать. Терминсене ытларах чух чĕлхе ăслăлăхĕн определенийĕсемсĕрех, лексика мелĕпех ăнлантармалла. Вĕсем ачасен пуплевĕнче тĕрлĕ хăнăхтару тунă май çирĕпленсе пымалла. Ачасен вĕренӳри ӳсĕмне терминсемпе усă курма пĕлнине тĕпе хур-са мар, пуплевĕн (вуласси, çырасси, ăнкарса тăнласси, çыхăнуллăн калаçасси) аталану шайне мала хурса хакламалла.

Ятарлă хăнăхтарусем тунă май вĕренекенсем сăмахăн сасă тытăмне ăнкарма, вăл сыпăксене пайланнине асăрхама, унăн пĕлтерĕшлĕ пайĕсене уйăрма хăнăхаççĕ, пуплев пайĕсемпе, вĕсен паллăрах формисемпе, предложени тĕсĕсемпе, предложени членĕсемпе, тĕрĕс çырмалли йĕркепе паллашаççĕ, чĕлхе материалне ушкăнлама, танлаштарма, пĕтĕмлетме хăнăхса пыраççĕ.

Чĕлхе «мулĕн» тĕрлĕ сийне тишкерессн класран класа анлăланса пырать, пуплеве аталантарассин тĕллевĕсемпе тачă çыхăнать. Тăван чĕлхене тишкерме вĕрентесси пуçламăш классенче çакнашкал йĕркепе пулса пырать.

**Сасăсемпе сас паллисем.** Вĕсем хушшинчи уйрăмлăхсем çинчен ачасем 1-2-мĕш классенчех пĕлеççĕ. Сасăсем уçă тата хупă, хытă тата çемçе, янравлă тата янравсăр пулнине палăртма вĕренеççĕ; ***сыпăк, пусăм*** ăнлавсемпе паллашаççĕ, схемăпа усă курса сăмахсен сасăпа сас

палли тытăмне тишкереççĕ. Вулама-çырма вĕренмелли кашни урокрах ачасем пуплевĕн ансат тĕслĕхĕсене пăхса тухаççĕ, çавна май фонетика терминĕсемпе усă курма та хăнăхаççĕ. 2-мĕш класра фонетикăпа графика тишкерĕвĕ тĕрĕс çырма вĕрентессипе тата пуплев кăлтăкĕсене юсассипе çыхăнать.

3-4 – мĕш классенче ачасен çак пĕлĕвĕсемпе ăслайĕсем, хăнăхăвĕсем малалла аталанаççĕ. Вĕсен пуплеве тăнлас-итлес сисĕмĕ çивĕчленет, сăмахăн сасăпа сас палли тытăмне чухласси лайăхланать. Ку тапхăрта фонетикăпа графика тишкерĕвĕпе усă курнин тĕп тĕллевĕсем - йăнăшсăр çырса илес, илтнипе çырас, çырнине тĕрĕслес ăслайсене вĕрентесси, тĕрĕс çырас хăнăхусене лайăхлатасси.

Тĕпрен илсен, фонетикăпа графика тишкерĕвне вĕрентнин тĕллевĕсем 1-мĕш класра та, 2-мĕш -4 -мĕш классенче те пĕрешкел: ачасем сасăсене ăнланса уйăрма, вĕсене тăван çырулăхра йышăннă пек палăртма вĕренмелле. 1-мĕш класс пĕтернĕ тĕле вĕсен çакна пĕлмелле: каланипе çырни хушшинче тӳрĕ шайлашу çук, сăмахри сасăсемпе сас паллисен йышĕ пур чухне те пĕр пек мар, чылай сас паллин темиçе пĕлтерĕш пулать (сăмахран, хытă хупă сасса та, çемçине те пĕр пекех палăртатпăр: ут - ӳт, сăн - сĕн), хăш-пĕр сас палли икĕ сасса палăртать (яка, юрă, ешчĕк), тепĕр чухне пĕр сассах икĕ сас палли çырса палăртатпăр (кукăль, мăкăнь, вулать).

2-мĕш класра вырăс чĕлхинчен кĕнĕ хăш-пĕр сăмахсене калассипе, çырассипе паллаштарма пуçлатпăр. Кунсăр пуçне ачасем чăн чăваш сăмахĕсенчи вăрăмланнă сасса илтме, ансат тĕслĕхсенче ăна икĕ пĕр пек сас палли çырса палăртма вĕренеççĕ, илтнипе (диктант) çырма хăнăхаççĕ.

3-4 -мĕш классенче тĕрлĕрен хăнăхтару пурнăçланă май вĕренекенсем тĕрĕс çырассин йывăрлăхĕсене асăрхама-туйма, орфографин чылай правилипе усă курма пуçлаççĕ. Çапла вара, сăмахăн сасăпа сыпăк тытăмне тишкерес хăнăхусене лайăхлатса пырса, вĕсене сăмахăн пĕлтерĕшлĕ пайĕсене асăрхамалли хăнăхтарусемпе çыхăнтарса ачасен тĕрĕс çырас мехелне вăйлатсах пыратпăр. Унсăр пуçне фонетикăпа графика тишкерĕвĕ ачасен пуплев культурине (сасăсене уçăмлăн кăларасси, сăмахсене лите-ратура чĕлхинчи пек каласси, пуплев янравлăхĕ) лайăхлатассипе тачă çыхăнмалла.

**Сăмах.** Пуçламăш шкулта вĕренекенсен сăмах йышне пуянлатассине тăватă çулĕпех тĕп тĕллевсенчен пĕри тесе шутламалла. Ку тĕллеве пуплеве пур енлĕн аталантармалли уроксенче тĕрлĕ хăнăхтару тутарса пурнăçламалла. Чĕлхемĕрти сăмахсем вăл е ку япалана, пулăма, вĕсен ĕçне т.ыт.те палăртнине, пĕлтерĕшĕпе çывăх е хире-хирĕç пулнине, предложенире, текстра сăмахпа темиçе пĕлтерĕшпе усă курма май

пуррине ачасем чӗлхе теорине тӳррӗн вӗренсе мар, тӗрлӗ хӑнӑхтару, сӑнавсем тунӑ май куҫ кӗрет курмалла. Вӗсем шухӑша тӗрӗсрех палӑртакан сӑмахсене суйлама вӗренсе пыраҫҫӗ, сӑмах йышӗ пуянланса пырать, унпа усӑ курасси лайӑхланать.

2-мӗш -мӗш класра сӑмах тытӑмӗпе ***(сӑмах тымарӗ, пӗр тымарлӑ сӑмахсем)*** паллаштарма пӑхнӑ. Анчах ку терминсемпе паллаштарicченех сӑмахсем пӗлтерӗшлӗ пайсенчен тӑнине асӑрхама пулӑшакан, вӑл е ку пӗлтерӗшлӗ пай пуррине кура сӑмахӑн пӗлтерӗшне тавҫӑрма вӗрентекен хӑнӑхтарусемпе усӑ курмалла. Ҫакӑ ачасен сӑмах йышне пуянлатас ӗҫре пысӑк вырӑн йышӑнмалла.

3-мӗш класра сӑмах тытӑмне туллинрех вӗренме палӑртнӑ. Вулав тата ҫыру хӑнӑхтарӑвӗсем пурнӑҫланӑ май вӗренекенсем ансат тӗслӗхсенче сӑмах тӑвакан тата сӑмаха улӑштаракан аффикссене асӑрхама пуҫлаҫҫӗ, ҫапла вара вӗсем сӑмахпа сӑмахӑн форми хушшинчи уйрӑмлӑха курма хӑнӑхаҫҫӗ. Сӑмах тытӑмне тишкерме хӑнӑхни ӑна мӗнле ҫырмаллине тавҫӑрма, ҫырнине тӗрӗсленӗ чух ҫак ӑслайпа усӑ курма май парать. Вырӑс чӗлхинчен кӗнӗ сӑмахсенче б, *г,* д, *ж, з, ҫ, о, ц, щ* сас паллисем ҫыратпӑр; хупӑ сасӑ икӗ уҫӑ сасӑ хушшинче вӑрӑммӑн илтӗннӗ чух та ӑна час-часах вырӑс чӗлхинчи евӗр пӗр сас паллипех паллӑ тӑватпӑр (парта, Саша, математика), пуҫламӑш формӑра сӑмах вӗҫӗнчи [ӑ] сасса *а* е *я* ҫырса палӑртатпӑр (Нина, Галя).

Сӑмахсене пӗлтерӗшӗ енчен ушкӑнласси-тишкересси ерипенех вӗсен улшӑну мелӗсене сӑнассипе ҫыхӑнса каять. Пуҫламӑш классенче ачасем пилӗк тӗп пуплев пайне уйӑрма вӗренеҫҫӗ: ***япала ячӗ, глагол, паллӑ ячӗ, хисеп ячӗ, ылмаш (местоимени).*** Пуплев пайӗсене уйӑрмалли мелсемпе вӗсем пуплев пайӗсен терминӗсемпе паллашиччен чылай малтан паллашма тытӑнаҫҫӗ.

Программӑра палӑртнӑ пуплев пайӗсене вӗренекенсем лексика пӗлтерӗшне, ыйтӑвӗсене тата улшӑну мелӗсене кура уйӑрма хӑнӑхмалла. Ку тӗллеве пурнӑҫласси виҫӗ тапхӑра тӑсӑлать. 2-мӗш класра вӗренекенсем япалана, ӗҫе, вӗсен паллисене пӗлтерекен сӑмахсен ыйтӑвӗсене калама хӑнӑхаҫҫӗ, сӑмахсене вӗсем мӗнле ыйтурине кура ушкӑнлама тытӑнаҫҫӗ. 2-мӗш класра вӗсем япала ячӗ, ***глагол, паллӑ ячӗ, ылмаш*** терминсемпе усӑ курма хӑнӑхмалла. Ылмаш тесе ку класра сӑпат ылмашне калаҫҫӗ. Хыҫ сӑмахсемпе союзсем ҫинчен ятарласа вӗренмеҫҫӗ, анчах та вӗсем уйрӑм сӑмахсем пулнине туйма, вӗсене уйрӑм ҫырма хӑнӑхтарса пымалла.

3-мӗш класра вӗренекенсене япала ячӗсем улшӑннине, вӗсем пӗрреллӗ тата нумайлӑ хисепсенче пулнине, ытти сӑмахсемпе ҫыхӑннӑ чух тӗрлӗ аффикс йышӑнма пултарнине тӗслӗхсемпе кӑтартса памалла. **Ӳкӗм** ***(падеж)*** терминпа паллаштармалла мар, апла пулин те ачасем

ӳкĕм аффиксĕсем йышăннă япала ячĕсен ыйтăвĕсене лартма вĕренсе çитмелле. Ĕç-хĕлсене, вĕсем хăш вăхăтрине, паллă ячĕсене тĕрлĕ хăнăхтару тунă чух пĕлтерĕшпе ыйтăвне кура палăртма хăнăхмалла. Шут хисеп ячĕсен тулли тата кĕске формисене тĕрĕс çырма хăнăхтармалла, ку пуплев пайĕн кĕске формисене япала ячĕсемпе çыхăнтарма, вĕсемпе пуплевре усă курма вĕрентсе пымалла.

4-мĕш класра маларах вĕреннĕ пуплев пайĕсемпе тĕплĕнрех паллаштарма, япала ячĕсем мĕнле ӳкĕмрине чухлама, терминпа усă курма, анлă усă куракан сăмахсене тĕрлĕ ӳкĕмре лартма, тĕрĕс калама тата çырма вĕрентмелле.

Ĕç-хĕл çинчен те тĕплĕнрех вĕрентмелле: тăтăшах пуплевре тĕл пулаканнисене виçĕ вăхăтра сăпатлама, вĕсен пурлă тата çуклă формисемпе усă курма хăнăхтармалла. Сăпатланă май сăпат формисемпе пĕрреллĕ тата нумайлă хисепсенче тĕрĕс усă курма, вĕсене тĕрĕс калама тата çырма вĕрентмелле. Тĕрлĕ ӳкĕмри япала ячĕсене сăпат ылмашĕпе ылмаштарнине сăнаттарса ку мелпе пуплевре усă курма хистемелле.

Паллă ячĕсем çинчен те 4-мĕш класра вĕренекенсене çĕнĕ пĕлӳ памалла. Уйрăмах вăйлă степеньри ем-ешĕл, сап-сарă, кăн-кăвак йышши паллă ячĕсене (терминне асăнмасăр) тĕрĕс çырассине тимлемелле. Йĕрке хисеп ячĕсен ыйтăвĕсене лартма, вĕсене ячĕсемпе çыхăнтарма тата тĕрĕс çырма хăнăхтарса пымалла, вĕсемпе пуплевре усă курма вĕрентмелле.

**Грамматика формисем.** Пуплев пайĕсем пирки çӳлерех каланисĕр пуçне кашни класрах уйрăмах тимлемелли грамматика формисен шутĕнче - япала ячĕсен камăнлăхне (сăпатне) палăртасси, пулăшу пĕлтерĕшлĕ япала ячĕсен тăтăшрах тĕл пулакан ӳкĕм формисем.

**Предложени.** Кĕçĕн классенче вĕренекенсен: 1) предложени пуплевĕн тĕллевне кура калуллă, ыйтуллă е хистевлĕ (хушуллă) пулнине, ăна мĕнле каланине кура — кăшкăруллă е кăшкăрусăр пулни çинчен; 2) предложени членĕсем çинчен; 3) предложенири сăмахсен çыхăнăвĕ çинчен; 4) предложени сăмах майлашăвĕсенчен тăни çинчен пĕлмелле. Çак ăнлавсемпе ачасене 4 çул хушшинче ерипен паллаштарса çитермелле.

1 -мĕш класра ачасем предложение пуплевре асăрхама, ăна сăмахран уйăрма, ăна (тишкернĕ хыççăн) çырма, пысăк сас паллинчен пуçлама, вĕçĕнче пăнчă лартма вĕренеççĕ.

2 -мĕш класра предложени вĕçĕнче, пăнчăсăр пуçне, ыйту е кăшкăру палли лартассипе паллашаççĕ, уйрăм сăмахсене палăртса калама, предложени вĕçĕнчи паллăпа тивĕçӳллĕ интонаци тума хăнăхаççĕ.

3-мĕш класра вĕренекенсем предложени пуплев тĕллевне кура калуллă, ыйтуллă, хистевлĕ, интонацине кура — кăшкăруллă е кăшкăрусăр пулни çинчен пĕлмелле, предложенин çак тĕсĕсемпе пуплевре тĕрĕс усă курма хăнăхмалла.

4-мĕш класра ачасем пĕр йышши членлă (япала ячĕпе паллă ячĕсенчен, глаголтан пулнă тĕслĕхсем) предложенисемпе паллашаççĕ. Ку предложенисене тĕрĕс интонаципе калама, вĕсемпе калаçура тата çырура усă курма, пĕр йышши членсене çырура хӳреллĕ пăнчăпа (ансат тĕслĕхсем) уйăрма вĕренмелле.

Предложени членĕсемпе паллашасси 2-мĕш класра пуçланать. Ачасем кам е мĕн çинчен тата мĕн каланине палăртакан сăмахсене тупма вĕренеççĕ. Çак класрах ***подлежащи, сказуемăй*** терминсемпе усă курма тытăнаççĕ, вĕсен пĕлтерĕшĕсене чухлама пуçлаççĕ. 3-мĕш класра ***кĕçĕн членсем*** терминпа паллаштармалла, ***сăмах майлашăвĕ*** ăнлавпа, терминпа усă курма вĕрентмелле.

Хутсăр предложени тытăмне тишкересси класран класа ерипен кăткăсланса пымалла. Çавăнпа пĕрлех тĕрлĕ йышши предложени йĕркелеме вĕрентмелле, тунă предложенисене тĕрĕс çырма хăнăхтармалла.

Чĕлхе пĕлĕвĕн ăнлавĕсемпе паллашни, чĕлхене тишкерме вĕренни орфографи правилисене ăнланма, вĕсемпе усă курма пулăшмалла. Орфографи правилисемпе усă курма вĕрентес тĕллевпе куллен-кунах ерипен кăткăсланса пыракан хăнăхтарусем тутармалла. Çырнине тĕрĕслес ăслая та аталантарсах пымалла.

Тĕрĕс çырма вĕрентесси кулленхи словарь ĕçĕпе, фонетика, морфологи тата синтаксис хăнăхтарăвĕсемпе тачă çыхăнмалла.

Çырма йывăр сăмахсене (мĕн вĕрентме палăртнине шута илсе) çав хăнăхтарусене тăтăшах кĕртмелле, ачасем çав сăмахсене пĕр шикленӳсĕр çырма вĕренсе çитчĕр.

**Çыхăнуллă пуплев**. Кĕçĕн çулхи ачасем малашне мĕнле вĕренсе пырасси, ăс-тăн илесси пуплевпе шухăшлав аталанăвĕнчен килет. Çавна кура çыхăнуллă пуплев хăнăхтарăвĕсем кашни урокрах тĕп вырăнта пулмалла. Вĕсене текста вулассипе, тăнлассипе çыхăнтармалла, вĕсемпе пĕрлех текст тăвасси те, ăна çырасси те кашни класрах тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла.

Кĕçĕн классенче вĕренекенсен çыхăнуллă пуплевне аталантарасси, пĕтĕмĕшле илсен, çыхăнуллă текст тума вĕрентессипе пĕр килет. Вуланă е итленĕ калав, выляса кăтартнă диалог ─ ачасемшĕн çавăн евĕр текст тумалли тĕслĕхсем.

Малтанхи вăхăтра ачасем итленĕ е вуланă калава çывăх текст тума, урăхла каласан, изложени хатĕрлеме, каярахпа вара курни-илтни, вулани çинчен çыхăнуллă каласа пама, çырма пуçлаççĕ.

Çыхăнуллă пуплев хăнăхтарăвĕсене вулав урокĕсенче те, чĕлхе урокĕсенче те ирттермелле, вĕсене сăмах вĕççĕн каласа та, çырса та пурнăçламалла. Чĕлхе урокĕсенче, тĕпрен илсен, изложенисемпе сочиненисем, вулав урокĕсенче вара сăмах вĕççĕн тумалли ĕçсем ытларах сĕнмелле.

Ачасене *текст* ăнлавпа паллаштармалла, текстăн тытăмне сăнаттармалла, ансат текстсем тума вĕрентмелле. Çак ĕçре тĕрлĕ мелпе, курăм хатĕрĕсемпе анлăн усă курмалла.

## АЧАСЕНЧЕН 4-МĔШ КЛАСРАН ВĔРЕНСЕ ТУХНĂ ТĔЛЕ КĔТЕКЕН РЕЗУЛЬТАТСЕМ

**Пуплеве пур енлĕн аталантарнă май чĕлхене ансат тишкерме, терминсемпе усă курма вĕрентесси**

***Харкамлăх результачĕсем :***

- таса, тĕрĕс, вырăнлă пуплев çыннăн сапăрлăх тата пĕтĕмĕшле аталанăвĕн палăрăмĕ пулнине ăнланни;
- чĕлхепе тирпейлĕ, тĕрĕс усă курма вĕренес кăмăлĕсем çирĕпленни;
- хутшăну культурин правилисемпе килĕшӳллĕн вăхăтра тав тума, каçару ыйтма, саламлама, вашават сăмах хушма, япала ыйтса илме, чĕнĕве палăртма пĕлни;
- чĕлхе харкам ăславлă пултарулăхне, шухăш вĕçевне палăртмалли, аталантармалли хатĕр пулнине ăнланни.

***Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:***

- чĕлхе тĕп хутшăну хатĕрĕ, наци культурин единици, вĕренӳ тата аталану хатĕрĕ пулнине ăса хуни;
- чĕлхен тĕрлĕ çăл куçсенче кирлĕ тивĕçлĕ информаци тупма, ăнăçлă усă курма хăнăхса пыни;
- чĕлхе хатĕрĕсемпе хутшăну тата вĕренӳ задачисемпе шайлашуллă тивĕçлĕ усă курма вĕренсе пыни.

***Предметăн пайрам результачĕсем :***

— вĕреннĕ пуплев пайĕсем, вĕсен паллисем, предложенин пĕр йышши членĕсем ҫинчен ҫирĕп пĕлни;

- вĕреннĕ орфограммăсенчен тăракан 55-60 сăмахлă текста йăнăшсăр, таса та илемлĕ ҫырса илме, диктант ҫырма пултарни;
- пĕр йышши членлă предложенире (вĕреннĕ тĕслĕхсем) чарăну паллисем лартма вĕренни;
- сăмахăн сасăпа сас палли тытăмне тишкерме, тымарĕпе аффиксĕсене тупма хăнăхни;
- япала ячĕсен, сăпат ылмашĕсен падежĕпе хисепне, глаголсен хисепне, сăпачĕпе вăхăтне палăртма пултарни;

— предложенин ансат синтаксис тытăмне чухлама: вăл тĕллевпе интонаци тĕлĕшĕнчен мĕнлине калама, унăн тĕп членĕсемпе кĕҫĕн членĕсене тупма, ыйтусем тăрăх вĕсен ҫыхăнăвне тата пĕр йышши членсене асăрхама хăнăхса пыни;

- харпăр хăй тĕллĕн тунă планпа усă курса 80-90 сăмахлă текст тăрăх изложени ҫырма, пурнăҫра пулни-иртни, экскурсире курни, сăнани ҫинчен ҫыхăнуллă пĕчĕк калав йĕркелеме (сочинени ҫырма) вĕренсе пыни.

## 4-МĔШ КЛАСС

Ҫыхăнуллă пуплев. Текст. Унăн темипе тĕп шухăшĕ. Текст тытăмĕ (композици).

Изложенипе сочинени планĕсене ушкăнпа тата пĕччен тăвасси. Планпа усă курса 80-90 сăмахлă текст тăрăх тулли е кĕске изложени ҫырасси.

Пурнăҫра пулса иртнĕ пĕр-пĕр ĕҫ ҫинчен ушкăнпа хатĕрленнĕ хыҫҫăн пĕчĕк ăслав (сочинени) хайласси.

Пуплев этикечĕ. Каланине хирĕҫлесси: вашаватлăх тата тӳрккеслĕх. Каҫару ыйтасси, ӳкĕнĕве палăртасси, ашшĕ-амăшне, тус-тăвана уяв ячĕпе саламласси.

Ĕç хучĕсем. Шкулти хаçатпа, Шупашкарта тухса тăракан ача-пăча хаçат-журналĕпе çыхăну тытма хистесси. Пĕлтерӳ çырма хăнăхтарасси.

**Сăмах йышне ӳстересси, унпа усă курма пĕлнине çирĕплетесси. Сăмахсене тĕрлĕ мелпе ушкăнласси**

**Апат-çимĕç ячĕсем,** вĕсемпе çыхăнакан ытти пуплев пайĕсем: апельсин, груша, какао, кофе, крахмал, лимон, мандарин, пăрăç, персик, рагу, рассольник, сарделька, студень, сыр, тефтель, шницель;

йӳçĕ (тутлă) чуста, çĕр улми крахмалĕ, грек мăйăрĕ, арахис мăйăрĕ, шĕшкĕ мăйăрĕ, кедр мăйăрĕ, тутлă пăрăç, хура пăрăç, аш рассольникĕ, груша компочĕ, шăратнă сыр, чăмламалли резинка, çăра чей, симĕс чей, йӳçĕтнĕ купăста (пан улми);

чуста хур, чуста хăпарнă, чей пĕçер, консервла, пăрăçла, хĕрхӳлен (тĕслĕх, çу), чĕлхӳне çăтăн! (питĕ тутлă);

кĕрпек, сĕтек, тăварак, хĕрхӳ (апат), шывак (сĕт, кĕсел).

**Çут çанталăкпа, йĕри-тавралăхпа çыхăнакан сăмахсем:** Алтăр çăлтăр, Шурăм пуç çăлтăрĕ, тӳпе, Çурçĕр çăлтăрĕ, ейӳ, лачака, океан, континент, тӳремлĕх, вулкан, материк, полюс, тундра; юшкăнлă, шурлăхлă, лачакаллă.

**Ӳсен-тăран ячĕсем:** ама хупахĕ, шăнăр куракĕ, тал пиçен, ут куçĕ, авăн хаяр ути, куян купăсти, алоэ, кактус, йӳçĕ курăк, ниш курăкĕ (лантăш), шапа пăтти, сарă чăпăл курăкĕ, шыв лилийĕ, шыв курăк (водоросли).

**Тискер кайăк ячĕсем:** жираф, дельфин, кит, крокодил, морж, ондатра, песец, пурăш, сăвăр, тюлень, хăнтăр, шашка, шăши, юс; ондатра тирĕ, сăсар çуха.

**Хурт-кăпшанкă ячĕсем:** ăман, вăрăм туна, вис, йĕп вăрри, кăпшанкă, кăткă, кĕве, лĕпĕш, нăрă, пăван, сăвăс, сăвăслан, сăпса, сĕлĕх, таракан, уяр, хăнкăла, хурт, шăна, шăрчăк, шĕвĕрĕлчен, шĕкĕ, эрешмен; хурт-кăпшанкă, хурт-хăмăр, шăна-пăван, личинка, вĕлле хурчĕ, кăткă тĕми, кĕве хурчĕ, купăста лĕпĕшĕ, лĕпĕш хурчĕ, тислĕк нăрри, шыв нăрри, сăпса йăви, тĕкĕл тура йăви, сăрă хурт, хурт ами, шăрчăк чăрăклатать, эрешмен карти.

**Чĕлхене ансат тишкересси**

Чĕлхе пĕлĕвĕн терминĕсемпе паллашасси. Сăмах пулăвĕ. Аффикссем хушăнса çĕнĕ сăмахсем пулни. Хутлă сăмахсем. Мăшăр сăмахсем. Сăмахсене икĕ хут калани.

**Япала ячĕ.** Ӳкĕмсем (падежсем). Текстри, предложенири япала ячĕсем мĕнле падежрине вĕсен ыйтăвĕсем тăрăх пĕлесси. Хупă сасăпа *(юлташ, телей, сунар, пĕлĕт, хĕвел, кун)* тата [а], [э]? [ă], [ĕ], [у], [ӳ], [и] сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсен вĕçленĕвĕ.

**Сăпат ылмашĕсене** текстра тупасси, вĕсем хăш падежрине палăртасси.

**Глагол** вăхăт, сăпат тата хисеп тăрăх улшăнни. Унăн пурлă тата çуклă формисем.

**Паллă ячĕсен** тĕп, танлаштарулла тата вăйлă степенĕсем, вĕсемпе пуплевре усă курасси. Паллă ячĕсем -ак/-ек, -ăк/-ĕк, -кăн/кĕн, -чăн/-чĕн, -лă/-лĕ аффикссем хушăнса пулни.

**Предложени.** Предложенин пĕр йышши членĕсем. Вĕсем пĕтĕçтерӳпе (союзпа) *(анчах, çапах, тата, та(те)* тата пĕтĕçтерӳсĕр (союзсăр) çыхăнни.

Пĕр йышши членлă предложенисем тума пĕлесси.

**Орфографи** тата **орфоэпи.** Мăшăр сăмахсене çырасси: *сĕтел-пукан, сĕт-çу.*

Икĕ хут калакан сăмахсене çырасси: *ял-ял, хĕрлĕ-хĕрлĕ, пин-пин.*

**Сăпат ылмашĕсене** тĕрĕс каласси, çырасси: *эпĕ (эп), эсĕ (эс), эпир (эпĕр), эсир (эсĕр); манăн (ман), санăн (сан); манра, манран, санра, санран, пирĕнте (пирте), сирĕнтен (сиртен); вăл -унăн, ăна, унран.*

**Япала ячĕсен падеж формисене** тĕрĕс çырасси: *çыру - çырăвăн, çырăва; сăвă - сăввăн, сăвва; пĕрчĕ - пĕрчĕн, пĕрче; мăкăнь -мăкăньпе е мăкăньре; район -районта е районра.*

**Глаголăн çак формисене** тĕрĕс каласси, çырасси:

1)хальхи вăхăтăн сăпат формисене *(çыратăп - çырмастăп, çыратăн - çырмастăн (çырап - çырмап, çыран мар), ташлатпăр - ташламастпăр, ĕçлетпĕр-ĕçлеместпĕр, вулатпăр-вуламастпăр, вĕренетпĕр - вĕренместпĕр, ташлатăр - ташламастăр, ĕçлетĕр - ĕçлеместĕр, вĕренетĕр - вĕренместĕр, килетĕр - килместĕр, çыратӳ - çырмастӳ (çырат - çырмас мар);*

2)пулас вăхăт формисене *(ту — тăвăп, тăвăн, тăвĕ; çи — çиĕн,*

*çийĕп, çийĕ);*

3) [р] сасăпа пĕтекен *йĕр, кĕр, кӳр, пар, пер, пыр, тăр, хур, яр* глаголсен иртнĕ вăхăт формисене: *кĕтĕм, кĕтĕн, кĕчĕ, кĕтĕмĕр* ([р] сасă тухса ӳкет).

Çемçе [л'], [н'], [т'] сасăсемпе пĕтекен сăмах тĕпĕ çумне -лă(-лĕ) аффикс хушăнса пулнă сăмахсенче *ь* çырасси: *кукăльлĕ, супăньлĕ, тетрадьлĕ, медальлĕ, портфельлĕ.*

**Паллă ячĕсен вăйлă степенĕнче** *(хуп-хура, тӳп-тӳрĕ, ем-ешĕл, çап-çутă, сап-сарă, кăн-кăвак)* дефис лартасси.

**Пунктуаци.** Пĕр йышши членлă предложенисенче хӳреллĕ пăнчă лартасси.

## Таса та илемлĕ çырасси

Графика хăнăхăвĕсене малалла аталантарса пырасси. Сăмахсемпе предложенисене хăвăртрах çырма хăнăхтарасси. (Кирлĕ сăмахсемпе предложенисене учитель хăй суйласа илет.)

**Чăваш чĕлхи урокĕсен календарлă тематика планĕ. 2 - мĕш класс.**

| | | | Ĕç результачĕ | | | Ачасен ĕçĕ-хĕлĕ | Усă курмалли литература, кăтарту хатĕрĕсем. |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| **Урок номерĕ.** | **Урок теми** | **Сехет йышĕ** | **Кăмăл-сипете аталантарасси** | **Универсаллă ĕç-хĕлсем** | **Предмет ăшĕнчи пĕлӳ, хăнăху** | | |
| 1-4 | Предложени, самах, саса, сас палли. | 1 | Тăван çĕр-шыва юратма вĕрентесси. | Ачасен тавçăрулăхне аталантарасси, пуплевне пуянлатасси. | Пуплеве тишкерме хăнăхтарасси. | Ачасем «Çĕрĕм-шывăм, Чăваш çĕр-шывĕ» калава вулаççĕ, Чăваш Республикин Патшалăх гимне пăхмасăр вĕренеççĕ. | Ю.М.Виноградов, А.Р.Кульева. Чăваш чĕлхи. (ЧЧ). Ш.-2014, 3-4стр. |
| 5 | Вĕреннине аса илесси.Алфавит. | 2 | Сас паллисен йеркине ,выранне таранрах вĕрентесси. | Ачасене ушкăнпа ĕçлеме вĕрентесси; харпăр хăй ĕç вырăнне йĕркелеме хăнăхтарасси. | Предложенисене тĕрĕс чарăну туса илемлĕ вулама пĕлнине малалла аталантарасси, тĕп членсемпе кĕçĕн членсене предложенисенче тупма, предложенисене тунă чухне вĕсене кирлĕ вырăна лартма хăнăхтарасси, предложенири тĕп членсене тата сăмах | Ачасем кĕнекери хăнăхтарусене тата ĕç тетрадĕнче ĕçсене пурнăçлаççĕ. | Чч, 5-15стр. Э.Ф.Дмитриева, Т. Г. Эверскова «Диктант пуххи» Шупашкар. Чăваш кĕнеке издательстви. 2001ç.(ДП) 83 стр., курав диктанчĕ А.Р.Кульева, О.П.Кульев. Ĕç тетрачĕ.4класс. Ш-2013(ĔТ), 1-2стр |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | | майлашăвĕсене тупма хăнăхтарасси. | | |
| 6 | Тĕрĕслев ĕçĕ. Çырса илни. | 1 | Вĕçен кайăксене упрама вĕрентесси. | Ачасен çыхăнуллă пуплевне аталантарасси. | Текста тĕрĕс çырса илме хăнăхтарасси. | Текста çырса илеççĕ. | ЧЧ. 14 стр.<br>16 хăн. |
| 7 | Сочинени. Çуллахи асра юлнă кун. | 1 | Аслисене хисеплеме вĕрентесси, ĕçе юратма хăнăхтарасси. | Ачасен çыхăнуллă пуплевне аталантарасси. | Текста харпăр хăй тĕллĕн калăплама хăнăхтарни. | Ачасем вĕрентекен пулăшнипе йĕркеленĕ текста астуса юлни тăрăх çыраççĕ. | ЧЧ, 10 стр, ӳкерчĕк |
| 8-9 | Уса сасăсемпе хупа сасасем, сас паллисем. | 2 | Хăрушсăрлăх правилисене пăхăнса пурăнма хăнăхтарасси. | Шухăшлава йĕркелесе пыни: пĕтĕмлетни; тĕслĕхсемпе çирĕплетни. | Сăмах сасăсенчен (сас паллисенчен) тытăнса тăнине аса илсе пĕтĕмлетесси, çемçелĕх паллине, е,ç, ю, я сас паллисене тĕрĕс çырма хăнăхтарасси. | Ачасем чăваш алфавитĕнчи сас паллисене тишкереççĕ, пусăм çинчен каланине тĕслĕхсемпе çирĕплетме хăнăхаççĕ. | ЧЧ, 16-20стр.<br>ĔТ, 3-4стр. |
| 10 | Хыта уса сасасемпе семсе уса сасасем. | 1 | Пĕр-пĕринпе тĕрĕс хутшăнса пурăнма вĕрентесси. | Ачасен çыхăнуллă пуплевне аталантарасси. | Этикет тата калаçу этикечĕ ăнлавсемпе паллаштарасси. | Ачасем кĕнекери хăнăхтарусене пурнăçлаççĕ. | ЧЧ, 21-23стр |
| 11 | Хыта хупа сасасемпе семсе хупа сасасем. | 1 | Ĕçе юратма, туса упрама вĕрентесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси. | Сăмах тытăмне тата морфемăсен (сăмах тымарĕпе аффиксен) пĕлтерĕшĕсене аса илесси, сăмах пайĕсене тупма | Хăнăхтарусене пурнăçланă май ачасем сăмах тăвакан тата сăмаха улăштаракан аффикссене уйăраççĕ. | ЧЧ, 24-26стр.<br>ДП, 87стр. сăмах диктанчĕ<br>ĔТ, 5стр. |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | | хăнăхтарасси. | | |
| 12 | Сывлах сунасси.Сывпуллашасси. | 1 | Ачасене сăпайлăх сăмахĕсемпе усă курма хăнăхтарасси. | Ачасене кĕнекепе ĕçлеме вĕрентесси, çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси. | Чăваш чĕлхинчи сăпайлăх сăмахĕсене сăнасси, астуса юласси. | Ачасем кĕнекери хăнăхтарусене пурнăçлаççĕ, сăпайлăх сăмахĕсене тупаççĕ. | ЧЧ, 27-30стр. |
| 13 | Диктант | 1 | Керкуннене санама верентесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси. | çырма хăнăхтарасси. | Ачасем вĕрентекен вуласа панă текста итленĕ хыççăн астуса юлнине йĕркипе çыраççĕ. | ИП, 104стр. |
| 14 | Хыта уса сасалла самахсенче ( ь) палли сырасси. | 1 | Вĕçен кайăксене юратма, упрама вĕрентесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси. | Сăмах тăвакан аффиксем хушса пĕр сăмахран çĕнĕ пĕлтерĕшлĕ тепĕр сăмах тума хăнăхтарасси. | Ачасем сăмах тăвакан аффиксемпе палашаççĕ, çĕнĕ сăмахсем тума хăнăхаççĕ, паллă тунă сăмахсенчи аффикссене тупаççĕ. | ЧЧ, 31-35стр.<br>ĔТ, 6стр. |
| 15 | Тĕрĕслев диктанчĕ. | 1 | Çут çанталăк илемне туйма вĕрентесси. | Ачасен тимлĕхне аталантарасси. | Предложени вĕçне чарăну палли лартма, çемçелĕх паллине, е,ю,я сас паллисене, вăрăммăн илтĕнекен хупă сасăсене тĕрĕс | Ачасем вĕрентекен вуласа панă текста итлесе пынă май çыраççĕ. | Тăван чĕлхе урокĕсем, 21 с. |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | | çырма пĕлнине тĕрĕслесси. | | |
| 16 | Уйаракан семселех пали сырасси. | 1 | Тăван чĕлхе пуянлăхне курма вĕрентесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси. Ушкăнпа ĕçлеме хăнăхтарасси. | Мăшăр сăмахсен пулăвĕпе паллаштарасси, вĕсене дефиспа çырма хăнăхтарасси. | Ачасем кĕнекери хăнăхтарусене пурнăçлаççĕ, мăшăр сăмахсене тупаççĕ, тĕрĕс çырма хăнăхаççĕ. | ЧЧ, 35-39стр. ДП, 89стр. сăмах диктанчĕ Ĕç, 7стр. О. Г. Кульев, А. Р. Кульева. Чăвашла тĕрĕс çыратăп. Орфографипе пунктуаци тетрачĕ. 2-4 мĕш классем валли. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви: 2007 (ОПТ),21-24стр |
| 17-18 | Варам хупа сасса ике пер пек сас пали сырса палартни. | 2 | Çут çанталăк илемне курма вĕрентесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси. Ушкăнпа ĕçлеме хăнăхтарасси. | Пĕр сăмахах икĕ хут каласа сăмах форми тума тата çав формăна дефиспа çырма хăнăхтарасси. | Ачасем кĕнекери хăнăхтарусене пурнăçлаççĕ, икĕ хут калакан сăмахсене тупаççĕ, ĕç тетрадĕнчи ĕçсене пурнăçлаççĕ. | ЧЧ, 40-50стр. ДП, 92стр. ăслав диктанчĕ ЁТ, 7стр. ОПТ, 21-24стр. |
| 19 | Таванлах – хуранташлах самахесем. | 1 | Ваттисене сума сума вĕрентесси. | Харпăр хăйĕн ĕç-хĕлне сăнас-хаклас ăслай-хăнăхусене алла илсе пыни. | Пĕлтерӳпе çыру хушшинчи пĕрпеклĕхе тата уйрăмлăха кăтартасси, çырма хăнăхтарасси. | Ачасем вĕрентекен пулăшнипе çыру е пĕлтерӳ йĕркелесе çыраççĕ. | |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| 20-21 | Вырас челхинчен йышанна хаш-пер самахсене сырасси. | 1 | Тăван чĕлхене юратма вĕрентесси. | Ачасен тимлĕхне аталантарасси. | Мăшăр сăмахсене тата сăмаха икĕ хут каланипе пулнă сăмах формисене дефиспа çырма пĕлнине тĕрĕслесси. | Ачасем вĕрентекен вуласа панă текста итлесе пынă май çыраççĕ. | ДП, 94 стр |
| 22 | Орфографи словаре. | 1 | Çут çанталăка упрама чĕнесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси. | Текст, абзац ăнлавсемпе паллаштарни. | Ачасем кĕнекери хăнăхтарусене пурнăçлаççĕ, ĕç тетрачĕпе ĕçлеççĕ. | ЧЧ, 51-53 стр.<br>ĔТ, 8-10 стр. |
| 23 | Самах сыпаке. | 1 | Çут çанталăк илемне туйма вĕрентесси. | Ачасене кĕнекепе ĕçлеме вĕрентесси, çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси. | Текстăн тĕп шухăшне уйăрма вĕрентесси. | Ачасем кĕнекери хăнăхтарусене пурнăçлаççĕ, текстăн тĕп шухăшне палăртаççĕ. | ЧЧ, 59-66стр<br>ĔТ, 8-10стр. |
| 24-25 | Самахсене пер йеркерен тепер йеркене кусарасси. | 2 | Çут çанталăка упрама чĕнесси. | Харпăр хăйĕн ĕç-хĕлне сăнас-хаклас ăслай-хăнăхусене алла илсе пыни. | Калаçу тата çыру пуплевне аталантарасси. | Планпа усă курса калав йĕркелесе çыраççĕ. | ЧЧ, 50стр., 93 хăн. |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| 26 | Тӗрӗслев диктанчӗ. | 1 | Чӗр чунсене юратма вӗрентесси. | Ачасен тимлӗхне аталантарасси. | Ачасен пӗлӗвне тӗрӗслесси. | Ачасем вӗрентекен вуласа панӑ текста итлесе пынӑ май çыраççӗ. | ДП, 94стр. |
| 27-28 | Кам? Мен? Ыйтулла самахсем. | 2 | Çут çанталӑк илемне туйма вӗрентесси. | Çыхӑнуллӑ пуплеве аталантарасси, шухӑшлава йӗркелесси, пӗтӗмлетесси, мӑшӑрпа ӗçлеме вӗрентесси. | Текстӑн тытӑмӗпе паллаштарасси. | Ачасем кӗнекери хӑнӑхтарусене пурнӑçлаççӗ, текста пӗлтерӗшлӗ пайсем çине уйӑраççӗ. | ЧЧ, 66-71стр.<br>ЁТ, 8-10стр. |
| 29 | Пер япалана пелтерекен самахсем. | 2 | Чӗр чунсене юратма вӗрентесси. | Çыхӑнуллӑ пуплеве аталантарасси, шухӑшлава йӗркелесси, пӗтӗмлетесси, мӑшӑрпа ӗçлеме вӗрентесси. | Пӗр йышши членсем çинчен ӑнлантарасси, союзсӑр çыхӑнакан пӗр йышши членлӑ предложенисенче тӗрӗс интонаципе тума, кирлӗ чарӑну лартма вӗрентесси. | Ачасем кӗнекери хӑнӑхтарусене пурнӑçлаççӗ, пӗр йышши членсене тупаççӗ. | ЧЧ, 71-75стр.<br>ЁТ, 11-12стр. |
| 30 | Изложени. | 1 | Кайаксене юратма вӗрентесси. | Çыхӑнуллӑ пуплеве аталантарасси, шухӑшлава йӗркелесси, пӗтӗмлетесси. | Изложени çырма хӑнӑхтарасси. | Ачасем вӗрентекен вуласа панӑ текста итленӗ хыççӑн астуса юлнине йӗркипе çыраççӗ. | ИП, 107стр. |
| 31 | Япала нумайине пелтерекен самахсем. | 3 | Чӗр чунсене упрама вӗрентесси. | Ушкӑнпа, пӗр-пӗрне ӑнланса ӗçлеме хӑнӑхасси. | Пӗр йышши членсене çыхӑнтаракан союзсемпе | Пӗр йышши членлӑ предложенисене вулаççӗ, вӗсене çыхӑнтаракан | ЧЧ, 75-86стр.<br>ДП.96стр.<br>Астуса çырни. |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | | пĕтĕмĕшлĕн паллаштарасси, *анчах* тата *çапах, та (те), тата, е* союзсемпе çыхăнакан пĕр йышши членлă предложенисене тĕрĕс вулама, калама тата çырма вĕрентесси. | союзсене тупаççĕ. | ĔТ, 11-12стр. |
| 32 | Сочинени. Ман юратнă чĕр чун. | 1 | Чĕр чунсене юратма вĕрентесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси. | Пĕр йышши членлă предложенисем-пе çырура усă курма вĕреннĕ хăнăхăва малалла аталантарасси тата çирĕплетесси. | Юратнă чĕр чун çинчен сочинени çыраççĕ. | |
| 33 | Тĕрĕслев диктанчĕ. | 1 | Чĕр чунсене юратма вĕрентесси. | Ачасен тимлĕхне аталантарасси. | Пĕр йышши членлă предложенисене мĕнле çырнине тĕрĕслесси. | Ачасем вĕрентекен вуласа панă текста итлесе пынă май çыраççĕ. | ДП, 97 стр. |
| 34 | Сын ячесене,хушамачесене, ашше ячесене пысак саспаллипе сырасси. | 1 | Ĕçе юратма вĕрентесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси, мăшăрпа ĕçлеме вĕрентесси. | Япала ячĕсем, паллă ячĕсем тата глагол çинчен вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси, пуплев пайĕсене уйăрса илме тата вĕсемпе тĕрĕс усă курма пĕлнине аталантарасси. | Ачасем кĕнекери хăнăхтарусене пурнăçлаççĕ, сăмахсене пĕлтерĕшне кура ушкăнлаççĕ. | ЧЧ, 87-89стр.<br><br>ЧЧ, 88стр.,152хăн. сăвва пăхмасăр вĕренмелле<br>ĔТ, 13стр. |
| 35 | Пелтеру сырасси. | 1 | Çынна хисеплеме | Çыхăнуллă | Мĕн вăл пуплев | Тĕрлĕ темăпа калаçу | ЧЧ, 90-92стр. |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | вĕрентесси. | пуплеве аталантарасси. | пахалăхĕ? ыйту çине хурав тупасси. | йĕркелеççĕ. | |
| 36 | Изложени.<br>. | 1 | Кайаксене юратма верентесси.<br>. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси. | Кĕнекере панă текст тăрăх изложени çырас хăнăхăва çирĕплетесси. | Ачасем кĕнекери текст тăрăх изложени çыраççĕ. | ЧЧ, 150 хăн. 85 стр. |
| 37-38 | Мен тавать? Мен тавассе? Ыйтусенчи глаголсем. | 2 | Ĕçе юратма<br>вĕрентесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси, ушкăнпа ĕçлеме вĕрентесси. | Япала ячĕсем падежсем тăрăх улшăнма пултарни çинчен ăнлантарни. | Ачасем кĕнекери хăнăхтарусене пурнăçлаççĕ, падеж ыйтăвĕсене вĕренеççĕ. | ЧЧ, 92-95стр.<br>168 хăн. Астуса çырни.<br>ĔТ, 14стр. |
| 39 | Мен туре? Мен турес?ыйтусенчи глаголсем. | 1 | Çемьери çынсене хисеплеме вĕрентесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси, ушкăнпа ĕçлеме вĕрентесси. | Хупă сасăпа пĕтекен япала ячĕсен вĕçленĕвĕпе паллаштарасси, *çемçелĕх паллипе, р, рь, л, ль, н, нь, сть, сь, зь* сас паллисемпе пĕтекен сăмахсене тĕрĕс вĕçлеме, çырма вĕрентесси. | Ачасем кĕнекери хăнăхтарусене пурнăçланă май хупă сасăпа пĕтекен япала ячĕсен вĕçленĕвне тишкереççĕ. | ЧЧ, 95-98стр.<br>ĔТ, 15 стр. |
| 40 | Хиресле пелтерешле глаголсем. | 2 | Тĕрĕслĕхе вĕрентесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси, | *[а], [е], [и]* сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсене вĕçленĕ чух пару падежĕнче пулакан уйрăмлăхсене | Ачасем кĕнекери хăнăхтарусене пурнăçланă май уçă сасăпа пĕтекен япала ячĕсен вĕçленĕвне тишкереççĕ. | ЧЧ, 98-100стр. ДП, 104стр. сăмах диктанчĕ<br>ĔТ, 16стр. |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | ушкăнпа ĕçлеме вĕрентесси. | асăрхама вĕрентесси, çав падеж формисемпе çырура тата калаçура тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси; *[ă], [у], [ӳ]* сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсен вĕçленĕвĕнчи камăнлăхпа пару падежĕсенче пулакан уйрăмлăхсене асăрхама вĕрентесси, ку формăсемпе тĕрĕс калама-çырма хăнăхтарасси. | | |
| 41 | Сывах пелтерешле глаголсем. | 1 | Хĕллехи вăрман илемлĕхне туйма вĕрентесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси. | Ъкерчĕк тăрăх сăмахсене тĕрлĕрен падежсене лартса вĕсене ытти сăмахсемпе тĕрĕс çыхăнтарса сочинени çырма хăнăхтарасси. | Ъкерчĕк тăрăх учитель пулăшнипе сочинени йĕркелесе çыраççĕ. | ЧЧ, 103 стр |
| 42 | Тав тавасси. | 1 | Ĕçе тĕплĕ тума вĕрентесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, | Япала ячĕсене нумайлă хисепре вĕçленĕ чухне камăнлăх, пару, вырăн, туху | Ачасем кĕнекери хăнăхтарусене пурнăçланă май нумайлă хисепри япала ячĕсен | ĔТ, 17-18стр.<br><br>ЧЧ, 101-102стр. |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | пĕтĕмлетесси, ушкăнпа ĕçлеме вĕрентесси. | падежĕсенче пулакан уйрăмлăхсене асăрхама вĕрентесси, ку формăсемпе тĕрĕс калама-çырма хăнăхтарасси. | вĕçленĕвне тишкереççĕ. | |
| 43 | Тĕрĕслев диктанчĕ. | 1 | Çут çанталăка юратма вĕрентесси. | Ачасен тимлĕхне аталантарасси. | Япала ячĕсемпе вырăнлă усă курма тата вĕсене тĕрĕс çырма пĕлнине тĕрĕслесси. | Ачасем вĕрентекен вуласа панă текста итлесе пынă май çыраççĕ. | ДП, 107стр. |
| 44-45 | Япала паллине пелтерекен самахсем. | 1 | Сăпайлă пулма вĕрентесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси, мăшăрпа ĕçлеме вĕрентесси. | Саламланă чух асра тытмалли правилăсемпе паллашасси, телефонпа калаçмалли, çыру çырмалли этикетпа паллашасси. | Ачасем кĕнекери хăнăхтарусене пурнăçлаççĕ. | ЧЧ, 105-107стр. |
| 46 | Тесе пелтерекен самахсем. | 2 | Вĕçен кайăксене хĕрхенме чĕнесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси, мăшăрпа ĕçлеме вĕрентесси. | Паллă ячĕсем çинчен илнĕ пĕлĕве çирĕплетесси, паллă ячĕсем чăваш чĕлхинче ĕç паллине кăтартма пултарни çинчен ăнлантарасси, синонимлă тата антонимлă паллă ячĕсемпе усă курма | Ачасем кĕнекери хăнăхтарусене пурнăçлаççĕ, паллă ячĕсене уйăраççĕ, пĕлтерĕшне палăртаççĕ. | ЧЧ, 108-114стр.<br>ДП, 108стр, сăмах диктанчĕ<br>ĔТ,19стр. |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | | хăнăхтарасси. | | |
| 47 | Сынна санлакан самахсем. | 1 | Çут çанталăка юратма вĕрентесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси, мăшăрпа ĕçлеме вĕрентесси. | Паллă ячăсен тĕп тата танлаштару степĕсен пулăвĕпе паллаштарасси. | Ачасем кĕнекери хăнăхтарусене пурнăçлаççĕ, паллă ячĕсене уйăраççĕ, степенĕсене палăртаççĕ. Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене пурнăçлаççĕ. | ЧЧ, 115-117стр. ЁТ,20-21стр |
| 48 | Изложени. | 1 | Чĕр чунсене упрама вĕрентесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси. | Изложени çырас хăнăхăва çирĕплетесси. | Учитель панă план тăрăх изложени çыраççĕ. | ИП, 105 стр. |
| 49 | Сыру сырасси. | 1 | Çут çанталăк илемне курма вĕрентесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси, мăшăрпа ĕçлеме вĕрентесси. | Паллă ячĕсен вăйлă стененĕн пулăвĕпе паллаштарасси. | Ачасем кĕнекери хăнăхтарусене пурнăçлаççĕ, паллă ячĕсене уйăраççĕ, степенĕсене палăртаççĕ. Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене пурнăçлаççĕ. | ЧЧ, 117стр.-120стр. ЁТ, 20-21стр |
| 50 | Тĕрĕслев диктанчĕ. | 1 | Чĕр чунсене юратма вĕрентесси. | Ачасен тимлĕхне аталантарасси. | Паллă ячĕсемпе япала ячĕсене тĕрĕс çырма пĕлнине тĕрĕслесси. | Ачасем вĕрентекен вуласа панă текста итлесе пынă май çыраççĕ. | ДП, 113 стр. |
| 51 | Хиресле пелтерешле пала ячесем. | 2 | Паттăрлăх туйăмне | Çыхăнуллă пуплеве | Хисеп ячĕсен пĕлтерĕшĕпе паллаштарасси, | Ачасем кĕнекери хăнăхтарусене пурнăçлаççĕ, хисеп | ЧЧ, 120-124стр. ЁТ, 24стр |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | аталантарасси. | аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси, мăшăрпа ĕçлеме вĕрентесси. | вĕсене тĕрĕс çырма хăнăхтарасси. | ячĕсене уйăраççĕ. Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене пурнăçлаççĕ. | |
| 52 | Перешкел пелтерешле пала ячесем. | 1 | Сăпайлă пулма вĕрентесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси, мăшăрпа ĕçлеме вĕрентесси. | Ĕç хучĕсемпе паллаштарасси, пĕлтерӳ çырма хăнăхтарасси. | Ачасем кĕнекери хăнăхтарусене пурнăçлаççĕ. | ЧЧ, 125-128стр. |
| 53 | Çырса илни. | 1 | Çут çанталăка сăнама вĕрентесси. | Ачасен тимлĕхне аталантарасси. | Предложенисене хăвăрт тата таса çырса илме вĕрентесси. | Текста тетраде çырса илеççĕ. | ЧЧ, 99-100 стр. |
| 54 | Тереслев диктанче | 2 | Тăван çĕр-шыва юратма вĕрентесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси, мăшăрпа ĕçлеме вĕрентесси. | 1, 2, 3-мĕш сăпат местоименийĕсемпе паллаштарасси, вĕсене предложенире уйăрса илме хăнăхтарасси, сăпат местоименийĕсене пĕреллĕ тата нумайлă хисепсенче вĕçлеме вĕрентесси, вĕсен падежĕсене палăртма | Ачасем кĕнекери хăнăхтарусене пурнăçлаççĕ, местоименисене уйăраççĕ. Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене пурнăçлаççĕ. | ЧЧ, 128-132стр.<br>ДП, 114стр. суйлав диктанчĕ<br>ĔТ, 25стр. |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | | хăнăхтарасси, тĕрĕс çырма вĕрентесси. | | |
| 55-57 | Пуплеве предложении сине уйарасси | 1 | Туслă пулма вĕрентесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси. | Ашшĕ-амăшне, тус-тăвана уяв ячĕпе саламлама вĕрентесси. | | ЧЧ,133-134стр.<br><br>ЧЧ, 135 стр, сăвва пăхмасăр вĕренмелле |
| 58-59 | Предложенин теп членесемпе кесен членесем. | 1 | Туслă пулма вĕрентесси. | Ачасен тимлĕхне аталантарасси. | Местоименисене тĕрĕс çырма пĕлнине тĕрĕслесси. | Ачасем вĕрентекен вуласа панă текста итлесе пынă май çыраççĕ. | ДП, 116стр. |
| 60 | Калулла, ыйтулла,кашкарулла предложенисем. | 1 | Чĕр чунсене юратма вĕрентесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси, мăшăрпа ĕçлеме вĕрентесси. | Глаголсен пурлă тата çуклă формисемпе паллаштарасси, вĕсене текстра тупма хăнăхтарасси, пурлă тата çуклă формăри глаголсене текстра тупас, пĕр формăран тепĕр форма тăвас, çуклă форма аффиксне тĕрĕс палăртас хăнăхусене çирĕплетесси. | Ачасем кĕнекери хăнăхтарусене пурнăçлаççĕ, глаголсене уйăраççĕ. Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене пурнăçлаççĕ. | ЧЧ, 134стр-138стр.<br><br>ДП, 118стр, астуса çырни<br><br>ĔТ, 26стр. |
| 61 | Изложени. | 1 | Тăван халăхăн паттăр ывăлĕсемпе мăнаçланма вĕрентесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси. | Изложени çырас хăнăхăва çирĕплетесси. | Учитель панă план тăрăх изложени çыраççĕ. | ИП, 127 стр. |
| 62- | Сасасемпе сас | 1 | Мухтанни ырă | Çыхăнуллă | Глагол вăхăчĕ | Ачасем кĕнекери | ЧЧ, 139стр-141стр. |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| 63 | паллисем,алфавит синчен вереннине аса илни. | | маррине ăнлантарасси. | пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси, мăшăрпа ĕçлеме вĕрентесси. | çинчен вĕреннине аса илесси, вăхăт аффиксĕн сăмахри вырăнне кăтартасси. | хăнăхтарусене пурнăçлаççĕ, глаголсене уйăраççĕ, вăхăтне палăртаççĕ. Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене пурнăçлаççĕ. | ĔТ, 27-28стр. |
| 64 | Терослев диктанче | 1 | Эмел курăкĕсене упрама вĕрентесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси, ушкăнпа ĕçлеме вĕрентесси. | Глагол сăпачĕн пĕлтерĕшĕсемпе, аффиксĕсемпе паллаштарасси. | Ачасем кĕнекери хăнăхтарусене пурнăçлаççĕ, глаголсене уйăраççĕ, сăпатне палăртаççĕ. Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене пурнăçлаççĕ. | ЧЧ, 141стр-143стр. ĔТ, 27-28стр. |
| 65-66 | Япала яче,глагол, палла ячесем синчен веренннине аса илни | 1 | Чĕр чунсене юратма вĕрентесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси, ушкăнпа ĕçлеме вĕрентесси. | Глагол хисеп тăрăх улшăнма пултарнине ăнлантарасси, сăпатлану ăнлава уçса парасси. | Ачасем кĕнекери хăнăхтарусене пурнăçлаççĕ, глаголсене уйăраççĕ, хисепне палăртаççĕ. Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене пурнăçлаççĕ. | ЧЧ, 143стр-145стр.<br><br>ĔТ, 27-28стр. |
| 67 | Орфографи,синоним сен словаресем | 1 | Çут çанталăк илемне туйма вĕрентесси. | Ачасен тимлĕхне аталантарасси. | Глаголсене тĕрлĕ формăра мĕнле çырнине тĕрĕслесси. | Ачасем вĕрентекен вуласа панă текста итлесе пынă май çыраççĕ. | Тăван чĕлхе урокĕсем, 72 стр. |
| 68 | Петемлету уроке | 2 | Чĕр чунсене юратма вĕрентесси. | Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, шухăшлава йĕркелесси, пĕтĕмлетесси, | Хальхи вăхăтри глаголăн пĕлтерĕшлĕ пайĕсемпе паллаштарасси, вăл пурлă е çуклă | Ачасем кĕнекери хăнăхтарусене пурнăçлаççĕ, глаголсене уйăраççĕ. Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене пурнăçлаççĕ. | ЧЧ, 145стр-151стр.<br><br>ĔТ,29стр. |

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | ушкăнпа ĕçлеме вĕрентесси. | формăра мĕнле сăпатра тата хисепре пулнине пĕлме хăнăхтарасси. | | |